Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзĕн ятарлă кăларăмĕ

ВĂЙ ПАТĂР!

«Эпир чунпа çамрăк-ха»

Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзне йĕркеленĕренпе часах вунă çул çитет. Çак тапхăрта вăл палăрмаллах аталаннă. Аслă ăру республикăри ял хуçалăхĕнче курăмлă тӳпе хывать. Общество организацийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе унăн председателĕ Александр САМЫЛКИН паллаштарать.

– Александр Петрович, çĕршывра АПК ветеранĕсен союзĕ Чăваш Енре кăна темелле. Хисеплĕ ватăсене, аграрисене пĕр йыша пуçтарас шухăш ăнсăртран çуралман-тăр?

– Тивĕçлĕ канăва тухсан хисеплĕ ватăсене час-часах манăça кăлараççĕ. Çулсем иртсен те эпир чунпа çамрăк-ха, пурнăç таппинчен юлас килмест. Аслă ăрăвăн пуян опычĕ çамрăксемшĕн паха.

Вунă çул каялла республикăри пĕр мероприяти хыççăн Аркадий Айдак, Петр Ивантаев, Анатолий Фадеев, Виктор Костин, Николай Иванов, Василий Шадриков, паллă ытти çын пуçтарăнса çивĕч ыйтăва сӳтсе явнă. Пĕр саслăн Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзне йĕркелеме йышăннă, пуçару ушкăнне туса хунă. Çак ĕçе районсенчи хастарсене те явăçтарнă. 2012 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче союзăн пĕрлехи пухăвĕ иртнĕ, общество организацийĕн уставне, ертсе пыракан органĕсене – председательпе çумĕсене, правлени членĕсене, ревизи комиссине – суйланă. Союзăн пĕрремĕш председателĕ Василий Шадриков, çумĕсем Петр Ивантаевпа Николай Иванов пулнă. 2016 çулччен ăна Василий Шадриков ертсе пычĕ. Ун хыççăн – Петр Ивантаев. Вăл пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă хыççăн кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнче çак ĕçе мана шанса пачĕç.

Союз – общество организацийĕ, нименле партире те тăмасть. Çак ĕçе хамăр ирĕкпе туса пыратпăр. Пирĕн тĕллев – пĕр-пĕринпе хутшăнасси, республикăри, районти АПК аталанăвне тӳпе хывасси, çамрăксене патриотизм воспитанийĕ парасси, çут çанталăка упрама, юратма вĕрентесси. Союз ветерансен прависене хӳтĕлет, вĕсене социаллă ыйтусене татса пама, ытти енĕпе пулăшать. Патшалăх, муниципалитет органĕсемпе çыхăну тытать.

– АПК ветеранĕсен союзĕн йышĕ çулсерен ӳсет. Унта республикăра палăрнă хисеплĕ ватăсем ытларах темелле. Ĕмĕрĕпе çĕр çинче ĕçленĕ хресченĕн союза кĕрес шанăç пур-и?

– Союз ĕçĕ-хĕлне 60 çынран пуçарса янă. Каярахпа ăна районсенче те йĕркеленĕ. Малтанхи тапхăрта вĕсем 2-3-шер хастартан тăнă. Хальхи вăхăтра правленире кăна 38-ăн эпир. Пурĕ йышра 453 член. Унсăр пуçне хулара чĕр тавар тирпейлекен предприятисен ветеранĕсен союзĕ 67 çынна пĕрлештерет. Вунă çулта районсенче те йыш палăрмаллах хушăнчĕ. Муркаш, Канаш, Çĕрпӳ, Комсомольски, Патăрьел тăрăхĕсенче пĕрлĕхсем уйрăмах пысăк.

Уставпа килĕшӳллĕн союза ял хуçалăх аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, ырă тĕслĕх кăтартнисене йышăнаççĕ. Общество организацине республика, район ертӳçисем, явапла вырăнта вăй хунисем кĕнĕ. Сăмахран, Илья Прокопьев, Валентин Агафонов тата ытти те. Пирĕн йышра Раççей, Чăваш Ен, район шайĕнчи депутатсем, ĕçре палăрнăшăн орден-медаль, хисеплĕ ята тивĕçнисем самай. Паллах, пĕрлĕх вăй илнĕ май ял хуçалăхĕнче – уй-хирте, фермăра тата ытти çĕрте – вăрах вăхăт тăрăшса ĕçленĕ, ялти хисеплĕ çынсене те союза илме палăртрăмăр.

– Хисеплĕ ветерансем тивĕçлĕ канăва тухнине пăхмасăр АПК аталанăвне курăмлă тӳпе хываççĕ, тĕрлĕ çĕре çитме, курма тăрăшаççĕ. Вĕсем ял хуçалăхĕнче пулса иртекен çĕнĕлĕхсене мĕнле йышăнаççĕ?

– Пурнăçран юлас мар тесе республикăри паллă предприятисенче пулатпăр, правлени ларăвне ирттеретпĕр. Малта пыракан опытпа, çĕнĕлĕхпе паллашнă май ветерансем ăна вырăнсенче влаç органĕсемпе, ертӳçĕсемпе пурнăçа кĕртме хутшăнаççĕ.

Юлашки вăхăтра ял территорине, АПКна аталантарассипе республикăра та тĕрлĕ программа йышăнчĕç. Пĕлтерĕшлĕ документа хатĕрлеме аслă ăрăва та явăçтараççĕ, сĕнӳсене шута илеççĕ. Пурнăç улшăнса пырсан та ветерансен пулăшăвĕ кирлех.)

Чăн та, ял хуçалăхĕ пĕр вырăнта тăнă вăхăтсем те пулчĕç темелле. Çакă пире те пăшăрхантарчĕ. Йывăр лару-тăруран тухма çулсем шырарăмăр. Халĕ тинех АПК тепĕр хутчен вăй илет. Ялсенче те пурнăç улшăнать: ФАПсем, шкулсем, ача сачĕсем çĕкленеççĕ, çул-йĕр тăваççĕ тата ытти те. Таса шыв ыйтăвне татса парассипе те ĕçлеççĕ. Агропромышленноç комплексĕнче çĕнĕ техникăпа, технологипе усă курма тытăнни савăнтарать. Мĕн пур ĕç-хĕле механизацилеме тăрăшаççĕ.

Çав хушăрах хăш-пĕр районта юхăнса выртакан пулăхлă çĕрсем те пур-ха. Çывăх вăхăтра вĕсене йăлтах пусă çаврăнăшне кĕртессе шанатпăр.

Юлашки вăхăтра республикăра АПКна аталантарассипе курăмлă утăмсем тăваççĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев пуçарăвĕпе аграрисене ял хуçалăх техники туянма кайнă тăкаксен 40 процентне саплаштарма пулăшаççĕ. Хушма хуçалăхра ĕне тытакансене те иккĕмĕш çул ĕнтĕ субсиди параççĕ. Кăçал каллех унăн хисепне ӳстернĕ. Ял çамрăкĕсем çурт-йĕр çавăрма çăмăллăхпа усă кураççĕ.

– Юлашки вăхăтра фермерсен юхăмĕ вăй илсех пырать. Фермерсен малашлăхне мĕнлерех курăтăр?

– «Пĕччен хулă хуçăлать», – тенĕ. Ман шутпа, фермерсен кооператива е ассоциацие пĕрлешмелле. Кун пек аталанма çăмăлрах. Халĕ техника хаклă. 20-30 гектар çĕршĕн ăна илеймĕн. Пĕрлешсе хăватлă техника илсен усă курма пулать. Фермерсен специалистсем, агроном, инженер çук. Каллех чăрмав. Вĕсем ветерансенчен час-часах пулăшу ыйтаççĕ.

– Александр Петрович, çамрăк ертӳçĕсем аслă ăрăва хисеплени, вĕсен сăмахне ăса хывма тăрăшни сисĕнет-и?

– Союз малтанхи тапхăртах республика ертӳçисемпе ĕçлĕ çыхăну йĕркеленĕ тăрăшрĕ. Çакă пире каярахпа районсенче туслăха çирĕплетме пулăшрĕ. Унтанпа хăш-пĕр тăрăхра пуçлăхсем улшăнчĕç. Вĕсемпе те пĕр чĕлхе тупса килĕштерсе ĕçлесшĕн.

Ветерансемпе районсенче канашлусем ирттересси йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Кăçал акă Красноармейски районĕнче ларăва пуçтарăнтăмăр. Унта ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов, ЧР сывлăх сыхлавĕн министрĕ Владимир Степанов та хутшăнчĕç. Сергей Геннадьевич мероприятисене яланах хутшăнма тăрăшать, АПКри ларутăрупа, çĕнĕлĕхсемпе паллаштарать. Паллах, çакă аслă ăрăва сума сунине кăтартать.

Республика ертӳçисем пĕлтерĕшлĕ ыйтусем йышăннă, саккунсене сӳтсе явнă чухне аграри ветеранĕсене те явăçтараççĕ. Ветерансем тĕрлĕ общество организацийĕсен ĕçне те хутшăнаççĕ.

Иртнĕ çул эпир, союз членĕсем, Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Олег Николаевпа тĕл пулса çивĕч ыйтусене хускатрăмăр. Çитменлĕхсене асăннипе пĕрлех ăна татса памалли çул-йĕре палăртрăмăр. Олег Алексеевич ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура пирĕн сĕнӳсене йăлтах кĕртнĕ, вĕсене пурнăçлассипе явапла ведомствăсене палăртнă. Çак тĕслĕхсем пире шаннине çирĕплетеççĕ, малашне ĕçлеме хавхалантараççĕ. Чăваш автономийĕн 100 çулхи юбилейне халаллана медальпе ветерансене те наградăларĕç. Ытти пĕлтерĕшлĕ пулăмра та час-часах чыслаççĕ.

Çитес вăхăтра вара ЧР Патшалăх Канашĕн çĕнĕ йышĕпе, Шупашкар хулин ертӳçисемпе тĕл пуласшăн. Пирĕн тĕллев – республика, район экономикине аталантарма, социаллă пурнăçне лайăхлатма хутшăнасси.

– Ял хуçалăхĕнчи çивĕч ыйту – кадрсем çителĕксĕрри. Çакна мĕнле майпа татса пама пулать-ши?

– Ял хуçалăхĕнче агроном, зоотехник, инженер, механизатор çителĕксĕрри аталанма чăрмантарать. Халĕ хирте хăватлă техника хуçаланать. Электроника вырнаçтарнă хаклă машина-трактора вĕренмен çынна шанса параймăн. Специалистсем хатĕрлессипе ЧР Ял хуçалăх министерствипе, Чăваш патшалăх аграри университечĕпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр. Республикăра агроклассем те уçăлчĕç. Вĕсенче вĕренекенсене ял хуçалăх аталанăвĕ, ĕç условийĕсем, шалу пирки ăнлантаратпăр. Агроклассем хыççăн çамрăксене ятарлă е аслă шкулсенче специальноç илсе тăван тăрăха таврăнма майсем туса парасшăн. Агроуниверситет студенчĕсемпе, диплом илсе яла таврăннисемпе те тĕлпулусем йĕркелетпĕр. Пурăнма, ĕçлеме условисем туса парсан çамрăксем хуçалăхсене таврăнаççех.

Çамрăксен çемье çавăрмалла. Ялсенче вара мăшăр тупасси те йывăртарах. Çавна май ялсем валли специалистсене хатĕрлесси комплекслă майпа пулса пымалла: учитель, тухтăр, агроном, инженер… Çак ыйтупа ĕçлемелĕх пур-ха.

Пурнăç малаллах шăвать. Эпир ватăлса пыратпăр. Пирĕн хамăр вырăна ĕçлеме çынсем хатĕрлемелле. Çав хушăрах хастар ветерансене те манмалла мар. Тĕллев – пултаруллă ĕçченсене асра тытасси. Çавна май Асăну кунĕсем ирттеретпĕр, Асăну хăмисем уçатпăр. Ку енĕпе Тăвай, Канаш, Комсомольски, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Виçĕ çул каялла Чăваш Республикин АПК энциклопедине хатĕрлесе кăлартăмăр. Унта Чăваш Енри АПК аталанăвĕн тапхăрне, унта камсем хутшăннине кăтартнă. Халĕ ветерансем энциклопедин иккĕмĕш тапхăрне кăларма сĕнеççĕ. Ăна та пурнăçламаллах.

Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзĕ çывхарса килекен Ял хуçалăхĕнче тата тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе пурне те саламлать.

Лариса НИКИТИНА.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

АПК ветеранĕсем Куславкка районĕнче.